# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

43 (8610) № * Шăматкун, çĕртме (июнь) уйăхĕн 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Районти юрăпа ĕç тата спорт уявĕнчен**

# Акатуй! Акатуй! Савăнма сăлтавĕ пур!




**Акатуйра Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçнисем.**

*Чăвашсен мĕн авалтан пыракан ырă йăла-йĕрке сахал мар. Вĕсенчен пĕри – çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ май Акатуя пухăнасси, ташласа-юрласа савăнасси, ĕç маттурĕсене чысласси-саламласси, малашлăх тĕллевĕсене палăртасси.*

*Ку ырă йăлана муркашсем те манăçа кăлармаççĕ. Çулленех çурхи ĕçсене вĕçленĕ хыççăн Лантăш вăрманĕн уçланкине районти юрăпа ĕç тата спорт уявне – Акатуя пухăнаççĕ. Кăçал уяв мероприятийĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин хутшăннипе 65-мĕш хут июнĕн 10-мĕшĕнче иртрĕ. Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ вара Республика кунне уявланă май июнĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта Хĕрлĕ тӳремре пулать.*

*(Акатуй пирки тĕплĕнрех хаçатăн 4 – 5-мĕш страницисенче паллашма пултаратăр).*

**Спорт**

# Тĕнче чемпионачĕ – кашни килтех

Июнĕн 14-мĕшĕнче Тĕнче футбол чемпионачĕ пуçланчĕ. Çак турнир Раççейре пĕрремĕш хут иртет. Раççейри кашни çыннăн тенĕ пекех турнирти пур матча та тӳлевсĕрех пăхма май пур.

Цифра телевиденийĕн сечĕпе Раççейре пурăнакансен 98 проценчĕ ытла усă курать. Сеть 10 телеканалтан тăракан мультиплекса трансляцилет, вăл шутра тĕнче чемпионатне кăтартакан висĕ телеканала та: «Первый канал», «Россия 1» тата «Матч ТВ».

Июнĕн 14 – июлĕн 15-мĕшĕсенче çак висĕ каналпа чемпионатăн пĕтĕм 64 матчне те кăтартаççĕ.

«Первый канал» тӳрĕ эфирта 27 матч кăтартать, вăл шутра Раççей команди вылякан сахалтан та икĕ матчне (Саудовская Аравия тата Уругвай çĕршывĕсен командисемпе выляние), финалăн пĕрре тăваттăмĕш икĕ вăййине, çурма финалти пĕр вăййа тата 3-мĕш вырăншăн иртекен вăййа. Кунсăр пуçне «Первый канал» тĕрлĕ интервью хатĕрлет, ирхи программăсене паллă хăнасене йыхравлать.

«Россия 1» телеканалпа тӳрĕ эфирта 7 трансляци пулĕ, вĕсен шутĕнче – финал вăййи те. Канал кăтартакан вăйăсен йышĕ- нче Раççей тата Египет футбол командисен вăййи, финалăн пĕрре тăваттăмĕш икĕ вăййи, çурма финалти пĕр вăйă.

Нумаях пулмасть йĕркеленнĕ «Матч ТВ» телеканал вара пĕтĕм 64 вăййа та кăтартать: 30 вăййа – тӳрĕ эфирта, ыттисене – маларах ӳкернĕ хыççăнхи йĕркепе. Çапла вара пĕр уйăха яхăн «Матч ТВ» хайĕн ĕçне пĕтĕмпех супертурнира халаллать: ятарлă передачăсем, интервьюсем, хыпарсем. Канал тĕнчери футбол фаначĕсем пирки те каласа кăтартĕ.

Çапла вара футбол чемпионатне килтех курма хальхи вăхăтри телевизор (кивĕ телевизор çумне цифра приставки кирлĕ) тата дециметр диапазонĕллĕ антенна кирлĕ кăна.

Чăваш Енре цифра эфирĕн телеканалĕсене çывăхри телебашньăран 46 ТВК е 58 ТВК урлă тытмалла.

Йышăнакан оборудовани пирки, ăна ĕçлетересси пирки талăкĕпех ĕçлекен хĕрӳ линие шăнкăравласа пĕлме пулать. Телефон номерĕ: 8-800-220-20-02 (тӳлевсĕрех).

**Ларуран**

# Йĕркелĕх çирĕплĕхрен пуçланать

**Право йĕркине пăснине асăрхаттарассипе ĕçлекен районти комиссин черетлĕ ларăвĕн кун йĕркине сахал мар ыйту кăларнă. Вăл шутра Муркашри «Фиеста» центрта йĕркелĕхе тытса тăрасси, ялсенче килтен спирт пур шĕвек сутни пирки уйрăмах çивĕч калаçу пулчĕ.**

Шалти ĕçсен районти пайĕн полици пуçлăхĕн çумĕ Виктор Бирюков пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи пилĕк уйăхра районта 108 преступлени пулнине регистрациленĕ. Преступленисене уçса парасси 83, 5 процентпа танлашнă. Вăл палăртнă тăрăх, çынсем пурĕ 2104 хыпар пĕлтернĕ.

Преступленисен пысăк пайĕ ют пурлăха вăрланипе çыхăннă. Юлашки çулсенче Интернет урлă ултавлă ĕçсем тăвасси те ӳссе пырать. В. Бирюков ку тĕлĕшпе Муркаш районĕнче те çаплах пулнине каларĕ, пилĕк уйăхра 10 ултавлă ĕç регистрациленине палăртрĕ.

«Фиеста» кану центрĕ пирки В. Бирюков уйрăммăн чарăнса тăчĕ, мĕншĕн тесен, вăл каланă тăрăх, кунта йĕркене пăснă факт питĕ нумай. 2017 çулта çак центрта канакансем йĕркене пăснă 80 факт регистрациленĕ, кăçал çак таранччен – 22 факт (вĕсенчен 6-шĕ – çынна хĕнени).

Çакăн пек лару-тăру полицейскисене самаях канăçсăрлантарать, мĕншĕн тесен, практикăра тĕрлĕ тĕслĕх пур. Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Владимир Степанов пĕлтернĕ тăрăх, кӳршĕ районти пĕр кану центрне шăпах йĕркене тытса тăрайманнишĕн хупма тивнĕ.

В. Бирюков иртнĕ кунсенчи тĕрĕслеве илсе кăтартрĕ. «Фиестăри» видеокамерăсем çырса пынине пăхсан, кунти ĕçченсем канма килнĕ пĕр ушкăн хăйне йĕркесĕр тытма пуçлани пирки полицейскисене чылай каярах пĕлтернине палăртнă. Центрта вара полицие чĕнмелли кнопка ал айĕнчех.

«Фиеста» хальхи вăхăтра ирхи 3 сехетчен ĕçлет. Ĕç вăхăтне 1 сехетчен кăна хăвармалла текен сĕнӳ те пулчĕ ларура.

Муркаш райповĕн «Общепит» пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Надежда Яргунькина каланă тăрăх, центрта лицензиллĕ хурал çук. «Кунти контролерсем ӳсĕр çынсене кĕртмеççĕ», – терĕ вăл. Н. Яргунькина çамрăксен кăна мар, аслисен те культура воспитанийĕ çителĕксĕррине палăртрĕ. Апла пулин те, кирек мĕнле учрежденире те йĕрке пуласси, чи малтанах, унăн хуçинчен килет. Çавна май, комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев «Фиестăра» йĕркелĕх тытса тăрассипе çывăх вăхăтрах конкретлă мерăсем йышăнмаллине çирĕппĕн каларĕ. Ку тĕлĕшпе уйăрнă вăхăта протокола та çырма сĕнчĕ.

**(Вĕçĕ 6 стр.)**

**Салам**

**СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ОТРАСЛЬ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Медицина ĕçченĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

«Сывлăх вăл – пурлăх», – пĕлтерет чăваш халăх ăслăлăхĕ. Медицина ĕçченĕсем çак нимрен хаклă пуянлăха сыхласа хăварассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ, çавăнпа вĕсен пархатарлă ĕçĕ халăх хушшинче яланах хисепре.

Сывлăха сыхлас ĕç отраслĕ умĕнче паян кĕтекен пурнăç тăршшĕне ӳстермелли, вилеслĕхе чакармалли пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллевсем тăраççĕ. Çакă кашни медицина ĕçченнех çӳллĕ шайри ăсталăхлă, тарăн пĕлӳллĕ пулма, чун туртнипе суйласа илнĕ ĕçе тата пархатарлă тивĕçе парăнса тăма хистет.

Чăваш Ен сывлăх сыхлав тытăмĕ юлашки çулсенче Раççейре чи тухăçлисенчен пĕри пулнине федераци шайĕнче палăртаççĕ. Республикăра медицина пулăшăвĕпе пурте усă курма пултармалли майсем йĕркелесси, сиплев учрежденийĕсен пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетесси, вĕсене хальхи хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтересси çине уйрăмах тимлĕн пăхатпăр, çапах та халăх сывлăхне сыхласа хăварас енĕпе пуринчен ытла сывлăх хуралçисем ырми-канми тăрăшаççĕ, вĕсен кулленхи çăмăлах мар ĕçĕ çынсене çирĕп сывлăхлă пулма, тепĕр чухне вара вилĕмрен çăлăнса юлма пулăшать.

Пурнăçне медицинăпа çыхăнтарнă мĕнпур çынна, хăйĕн професси уявне васкавлă пулăшу дежурствинче е чирлĕ çын вырăнĕ умĕнче ирттерекен пĕтĕм медицина ĕçченне чунтан тав тăватăп. Сирĕн пурнăçăрта савăнăç парнелекен самантсем май пур таран ытларах пулччăр, çемйĕрте вара ырлăхпа килĕшӳ хуçаланччăр.

Сире телейпе тăнăçлăх, çитĕнӳсем тата нумай çул сывлăхлă пурăнма сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**Раççейре**

# Муркаш районĕ – 3-мĕш вырăнта

Пĕтĕм Раççейри «Лучшее муниципальное образование России в сфере управления общественными финансами» вунпĕрмĕш конкурсра Муркаш районĕ 3-мĕш вырăн йышăннă.

2018 çулта конкурса Раççей Федерацийĕнчи 59 субъектран пурĕ 229 заявка панă.

Конкурса хутшăнакансен ĕçĕсене 69 критерие шута илсе хак панă.

**Хамăр инф.**

**Çырăнтару – 2018**

# Июльтен илсе тăма

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата почта уйрăмĕсенче ултă уйăха çырăнмалли хак – 434 тенкĕ те 22 пус.**


**24 ИЮНЯ – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**

**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**

Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом.

1-2.

**Саламлатпăр**

Юратнă тăхлача – Муркашра пурăнакан **Валентина Николаевна СЕРГЕЕВĂНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, юханшыв пек вăрăм кун-çул, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, хĕвел ăшши пек ăшă кăмăл, хуйхă-суйхăсăр пурăнма çутă ăраскал сунатпăр.



**Хисеплесе те сума суса хăтипе тăхлачи.**

Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăр, анне, асанне – Çĕньял Муркашра пурăнакан **Галина Васильевна ЕГОРОВА** çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче 65 çул тултарчĕ. Вăл 40 çула яхăн Муркашри сĕт заводĕнче ĕçленĕ, ĕçри хастарлăхшăн Чăваш Республикин промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн, ĕç ветеранĕн хисеплĕ ячĕсене тивĕçнĕ. Эпир сана юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕмми телей, ырлăх, пурнăçра ăнăçу, вăй-хал тата вăрăм кун-çул сунатпăр.



**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.**

Пирĕн хаклă та юратнă тăванăмăра – Муркашра пурăнакан **Людмила Николаевна ШЕБАЛОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе саламлатпăр. Вăрманти чи мăнаçлă юман евĕр çирĕп сывлăх, ирхи сывлăм пек таса кун-çул, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Хăвăра хисеп тунине яланах çӳлте тытăр, ачусенчен ырлăх пултăр. Мăнуксем вара чун ăшши пулса яланах савăнтарса пыччăр. Çумăнта яланах шанчăклă тăвансем, çывăх юлташсем пулччăр.



**Саламлаканĕсем: çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн хаклă та хисеплĕ çыннăмăра, ĕçтешĕмĕре – Юнкăри ача садĕнчи музыка ертӳçине **Валентина Арсентьевна СЕЛЮШКИНĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе пур кăмăлтан, чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сире эпир ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул, телей тата тулăх пурнăç, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, юханшыв пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр, кун-çулу хĕвел пек çутă, сукмаку таса та такăр пултăр.



**Салампа: Юнкăри ача сачĕн коллективĕ.**

Юратнă та ылтăн–кĕмĕлтен те хаклăрах, хисеплĕрен те хисеплĕ, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи çывăх мăшăра, кукаçине, асаттене, аттене, ăшă кăмăллă çыннăмăра – Оринин ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Валерий Тарасович БАРАНОВА** 65 çулхи юбилей ячĕпе пур кăмăлтан, чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Пурнăçра кашни утăму ырлăхпа, юратупа, килĕшӳпе, çутă ĕмĕтсемпе тултăр. Мăшăру кунсерен юрату парнелетĕр, ачусем тата мăнукусем пултарулăхпа савăнтарсах тăччăр, тăванусем хаклаччăр, çӳлти Турă пулăшсах пытăр. Эс пурришĕн Турра тав тума сăмах та çитмест. Йывăр вăхăтра сан çунатусем айĕнче канлăх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.



**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 5 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

**Районăн хисеплĕ çыннисем**

# Ĕçе халаллană пурнăç



Пирĕн халăхăмăр авалтан ывăл-хĕрне пурнăç сукмакĕне çирĕп утма вĕрентнĕ. «Çын ĕçпе илемлĕ», – тесе ăс парасси те çавăн чухнех çуралнă. Ваттисен сăмахĕ çулсем иртсен те хăйĕн чăнлăхне çухатман. Ачаран ĕçпе туслă ӳснисем пурăна киле ялшăн, районшăн, республикăшăн, пĕтĕм çĕршывшăн ырă тĕслĕх пулса тăнă. Хăйсен тăрăшулăхĕпе вĕсем ялпа унăн социаллă пурнăçне, ял хуçалăхне аталану çулĕ çине кăларнă. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуйĕнче пурăнакан Алексей Петров – шăпах çакăн пеккисен йăхĕнчен.

1928 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче Катăкуйĕнчи ĕçчен хресчен çемйинче йыш хушăнать. Çуралнă арçын ачана ашшĕпе амăшĕ Алексей ят парса ырă малашлăх сунаççĕ. Çĕнĕ пурнăç ачи кунпа мар, сехетпе аталанса пырать. Шкула çӳрет, вулама-çырма вĕренет, ӳсерехпе алла çурла тытса ял çыннисемпе пĕрле тырă вырать, авăн çапать, лаша пăхма çӳрет. Тивĕшри вăтам шкултан ăнăçлă вĕренсе тухать. Салтак ячĕ тухсан çĕршыв хуралне тăрать. 1948 – 1952 çулсенче Катăкуй каччи çар службине танкист пулса Сахалинта ирттерет.

Çартан киле таврăнсан вăйпитти арçынна Шетмĕпуç ял Советĕнче ĕçлеме шанаççĕ. Кунтан ăна кĕçех КПСС Муркаш райкомĕн ял хуçалăх пайĕн инструкторĕнче ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Яваплă ĕçе А. Петров çанă тавăрса кӳлĕнет: пуçлăхсем хушнине вăхăтра та пахалăхлă пурнăçланипе палăрать.

«Ăçта çуралнă – çавăнтах кирлĕ пулнă», – тет ваттисен сăмахĕ. Çĕршывра ял хуçалăхне аталантарасси çине ытларах тимлĕх уйăрма пуçланă вăхăт çитсен, ялсене янă 30 пин ертӳçĕ шучĕпе 1957 çулта Катăкуй каччине те тăван ене яраççĕ. Алексей Петрович пысăк яваплăхпа хăй пурăннă ялти колхоза ура çине тăратас ĕçе кӳлĕнет.

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратасси питĕ йывăррăн пулса пычĕ. Кашни ĕç уйрăм тимлĕх ыйтатчĕ. Ялта пурăнакансен кил хуçалăхĕсем кивĕччĕ, çурт-йĕрĕ хавшакчĕ, çул-йĕрĕ ячĕшĕн çеçчĕ. Пурăнмалли çуртсене кил хуçисем улăмпа та хăрăк-марăкпа, торфпа хутатчĕç. Хуçалăхăн ферма çурчĕсенче вара çил вылятчĕ. Çамрăк пăрусемпе сурăх-качака путеккисене хĕл сиввинчен хуçалăх кантурĕнче сыхлаттăмăр, – аса илет паян иртнĕ çулсен йывăрлăхне районăн Хисеплĕ гражданинĕ.

Çамрăк председатель çутă малашлăхпа ĕçе кӳлĕннĕ. Тырă-пулă акса, çĕр улми ларттса вĕсене вăхăтра пуçтарса кĕртесси, хĕл валли ытлă-çитлĕ утă янтăласси хуçалăха çирĕп ура çине тăратассин никĕсĕ пулнă. Ыранхи кунпа пурăнакан Алексей Петрович çак ĕçре ял хуçалăх техникине ытларах çул парасси енне пăхнă. Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз ял хуçалăх культурисен тухăçĕпе, техникăпа усă курассипе тата ăна тивĕçлĕ упрассипе кĕске вăхăтрах ырă ята тивĕçнĕ. Кунпа пĕрлех хуçалăхра фермăсен çĕнĕ сарайĕсемпе витисем çĕкленнĕ, общественла выльăх-чĕрлĕх кĕтĕвĕ ӳснĕ. Шетмĕпуçсен ĕне сăвăмĕпе выльăхсен ӳт хушаслăхĕ ыттисемшĕн ĕç тĕслĕхĕ пулса тăнă.

Колхоз производстви аталаннипе пĕрлех ял пурнăçĕ те кунсерен çĕнĕ шая çĕкленнĕ. Ялта пурăнакансем тивĕçлĕ ĕç укçи ĕçлесе илнине кура пĕрин хыççăн тепри çĕнĕ çуртсем çĕкленĕ, çĕнĕ пӳрт ĕçкисем уявланă. 1964 çулта колхоз территорийĕнче Культура çурчĕ ĕçлеме пуçланă. Ун хыççăнах çĕвĕ мастерскойĕ, столовăйпа гостиница тата медпункт хута кайнă. 1976 çулта шкул тăвас ĕç пуçланнă. Ялсене пăрăхпа шыв пырассине йĕркеленĕ. Ял пурнăçĕн социаллă енĕ тĕтăш лайăхланса пынă вăхăтрах хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх комплексĕсем уçалма пуçланă. Çапла вара колхозри выльăх-чĕрлĕх йышĕ те çулсерен хушăннă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем вĕçленнĕ тĕле Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра мăйракаллă шултра выльăх – 1800 пуçа, сыснасем – 3000 пуçа, чăх-чĕп 300 пуçа çитнĕ. Çапла вара колхоз çулсерен 500 тонна аш-какай туса илме пуçланă. Тырă-пулă тухăçĕ те 5 – 7 центнертан 26 – 30 центнера çитнĕ. Гектар пуçне 60 – 70 центнер çеç çĕр улми туса илнĕ хуçалăхăн «иккĕмĕш çăкăр» тухăçĕ 250 – 300 центнерпа танлашнă.

Тăван тавралăха сыхласа тата унăн илемне пулас ăрусем валли сыхласа хăварассипе те хуçалăхра ĕçсем пĕр вырăнта тăман. Çак тĕллевпе колхоз хăйĕн территорийĕнчи çырма-çатрара çĕр ишĕлнипе нумай кĕрешнĕ. Çапла вара А. Петров ертсе пынă çулсенче тунă 6 плотина шывĕпе хуçалăхăн сухаламалли çĕрĕсене 800 гектара яхăн шăварса тăма пуçланă. Ку вăл – тыр-пул тухăçне ӳстермелли черетлĕ утăм. Продукци ытлă-çитлĕ пулсан, экономика та тĕрек пулать. Пĕрлехи тăрăшулăхпа ĕçлесе илнĕ укçа-тенкĕпе хуçалăх машинăпа трактор паркне тĕтăш çĕнетнĕ, аталантарнă.

Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăха çирĕп ура çине тăратнă Алексей Петровича 1979 çулта Муркаш районе ертсе пыма шанаççĕ. Ĕçпе палăрнă ентеш 10 çул хушшинче райпо пăхса тăракан 20 ялта çĕнĕ магазин, райцентрта суту-илӳ центрĕпе хуçалăх таварĕсен магазинне тата кафе уçать.

Йывăрлăхсем умĕнче пуç усман ентеш тава тивĕçлĕ ĕçшĕн патшалăх чыславĕсĕр те юлман. Тĕрлĕ çулта ăна чылай Хисеп грамотисĕр пуçне «Хисеп палли», Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Октябрь Революцийĕн, Халăхсен туслăхĕн орденĕсемпе, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР потребкооперацийĕн отличникĕ те.

Акă камран тĕслĕх илмелле çамрăксен.

**А. БЕЛОВ.**

**День Республики**

# Программа основных мероприятий, приуроченных к празднованию в 2018 году Дня Республики

**20 июня**

10.00 ч. «Ача-пăча акатуйĕ» – V городской фестиваль детских творческих коллективов, посвященный традициям и обрядам национального праздника чувашей (г. Чебоксары, «Лакреевский лес»)

10.00 ч. 50-е республиканские игры юнармейского движения «Зарница» и «Орленок» (Цивильский район, МУП "Детский оздоровительный лагерь «Звездный»)

14.00 ч. Торжественное вручение ключей от пожарных автомобилей КУ «Чувашская республиканская противопожарная служба» ГКЧС Чувашии и ключей от автомобилей КУ ЧР «Лесная охрана» Минприроды Чувашии (г. Чебоксары, Красная площадь)

**21 июня**

10.00 ч. Открытие линии по производству сахарного печенья акционерного общества «АККОНД» (г. Чебоксары, АО «АККОНД»)

12.00 ч. Торжественное вручение государственных наград Российской Федерации и Чувашской Республики (г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 10, 17-й этаж, купольный зал)

15.00 ч. Открытие высокотехнологичного производственного комплекса по серийному выпуску детских резиновых и пластизольных мячей и игрушек акционерного общества «Чебоксарское производственное объединение имени В.И. Чапаева» (г. Чебоксары, АО «ЧПО им. В.И. Чапаева»)

**22 июня**

11.00 ч. Заседание «круглого стола» Комитета Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации по финансовому рынку на тему «Проектное финансирование в субъектах Российской Федерации» (г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 10, блок «Б», конференц-зал)

**23 июня**

8.00 ч. Открытие производственной площадки акционерного общества «Чувашторгтехника» (г. Чебоксары, АО «Чувашторгтехника»)

9.00 ч. Республиканские соревнования по гребле на шлюпке ЯЛ-6 среди учащейся молодежи (г. Чебоксары, летний Центр морской подготовки ДОСААФ)

9.00 ч. Открытие производства танк-контейнеров, предназначенных для хранения и транспортировки жидкостей, сжиженных газов и сыпучих материалов **ЗАО «Чебоксарское предприятие «Сеспель»** (Моргаушский район)

10.00 ч. Большой Совет Межрегиональной общественной организации «Чувашский национальный конгресс» (г. Чебоксары, Национальная библиотека)

11.00 ч. Открытие XXV Межрегиональной выставки «Регионы – сотрудничество без границ» (г. Чебоксары, Красная площадь)

11.00 ч. Праздничный концерт, посвященный Дню Республики, с участием ведущих детских творческих коллективов республики (г. Чебоксары, Красная площадь)

11.30 ч. Презентация лучших сельскохозяйственных предприятий Чувашской Республики «Клуб «Агро-100» (г. Чебоксары, Чувашская государственная сельскохозяйственная академия)

12.00 ч. Открытие VI Всечувашского праздника «Акатуй» (г. Чебоксары, Красная площадь)

15.00 ч. Открытие XVI Всероссийского конкурса мастеров декоративно-прикладного искусства «Русь мастеровая» на призы Главы Чувашской Республики (Мариинско-Посадский район, набережная реки Волги)

18.00 ч. Праздничный концерт, посвященный Дню Республики (г. Чебоксары, Красная площадь)

**24 июня**

12.00 ч. «Расцветай, мой край Чувашский!» – праздничная программа с участием коллективов – участников XXVI Всероссийского фестиваля народного творчества «Родники России» (г. Чебоксары, творческие площадки г. Чебоксары)

12.00 ч. «Славься, Чувашия!» – праздничная программа с участием самодеятельных коллективов Чувашии (г. Чебоксары, Красная площадь)

16.30 ч. Открытие выставки «Роспись иглой» из фондов Российского этнографического музея (г. Санкт-Петербург) (г. Чебоксары, Чувашский национальный музей)

17.00 ч. Праздничный концерт сводного Детского хора Чувашии (г. Чебоксары, Красная площадь)

18.00 ч. Поздравление с государственным праздником Чувашской Республики – Днем Республики. Вручение приза Главы Чувашской Республики победителю XVI Всероссийского конкурса мастеров декоративно-прикладного искусства «Русь мастеровая» (г. Чебоксары, Красная площадь)

19.00 ч. Гала-концерт участников XXVI Всероссийского фестиваля народного творчества «Родники России» (г. Чебоксары, Красная площадь)

**23–24 июня**

22.00 ч. XI Международный фестиваль фейерверков (г. Чебоксары, Красная площадь)

**27 июня**

14.00 ч. Торжественная церемония награждения лауреатов Государственных молодежных премий Чувашской Республики (г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 10, 17-й этаж, купольный зал)

**29 июня**

11.00 ч. Открытие XIX Республиканских летних сельских спортивных игр (Вурнарский район, пгт Вурнары)

**Мероприятия, посвященные празднованию Дня Республики, проводимые в Красноармейском районе**

9.30 ч. Открытие фельдшерско-акушерского пункта (с. Именево)

11.00 ч. Торжественное открытие праздничного мероприятия, посвященного Дню Республики (с. Красноармейское, стадион «Факел»)

12.00 ч. Выступление коллективов XXVI Всероссийского фестиваля народного творчества «Родники России» (с. Красноармейское)

14.00 ч. Театрализованный районный праздник песни, труда и спорта «Акатуй» (с. Красноармейское)

15.00 ч. Праздничный концерт, посвященный Дню Республики с участием творческих коллективов Чувашии, Республики Марий Эл, Тюменской области (с. Красноармейское)

**12–13 июля**

10.00 ч. Республиканская выставка-демонстрация «День поля – 2018»(Цивильский район, Чувашский научно-исследовательский институт сельского хозяйства – филиал ФГБНУ «Федеральный аграрный научный центр Северо-Востока имени Н.В. Рудницкого»).

Ыран – Медицина ĕçченĕн кунĕ

# Вĕсен аллинче çынсен пурнăçĕ



Июнь уйăхĕн виççĕмĕш вырсарникунĕнче çулсеренех Медицина ĕçченĕн кунне паллă тăваççĕ. Çак куна халалласа Муркаш районĕнчи медицина ĕçченĕсем кĕçнерникун уяв мероприятине ирттерчĕç.

Уява уçнă май Муркаш район тĕп больницин тĕп врачĕ Н. Кожевников ĕçтешĕсене саламласа пархатарлă ĕçшĕн тав сăмахĕ каларĕ. Сăлтавĕ те каламасăрах паллă: çыннăн сывлăхне упрассишĕн, пурнăçне çăлса хăварассишĕн тăрăшакан çынсем чи пысăк хисепе тивĕç. 2016 çултанпа Муркаш район больници кӳршĕ районсенчи çынсене те сиплет (ытларах хирурги енĕпе), медицинăри ăнлавпа иккĕмĕш шайри больница шутланать. Республикăра та пирĕн район больници лайăххисен йышĕнче.

Хальхи вăхăтра больница тытăмĕнче 400 ытла çын вăй хурать, врачсемпе медсестрасем ăсталăха ӳстерессипе тимлеççĕ. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтри çĕнĕ медицина оборудованийĕпе ĕçлеме те ăсталăх çителĕклĕ пулмалла. Каламалла, юлашки çулсенче больница пурлăх базине пуянлатассипе, капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерессипе те тимлет. Çак ĕçсем пĕтĕмпех медицина услугисен пахалăхне, апла пулсан çынсене сиплессин шайне те ӳстерме пулăшаççĕ.

Медицина ĕçченĕсене, ветеранĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та ăшă сăмахсемпе саламларĕ, район администрацийĕн Хисеп хучĕсемпе чысларĕ. Уяври чыслав саманчĕ вăраха пычĕ – тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕпе Тав çырăвне тивĕçнисем чылайăн пулчĕç.

Мăн Сĕнтĕрти «Картина» ансамбль те «управçă-ангелсене» илемлĕ юрăсем парнелесе савăнтарчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: ведомствăн Хисеп хучĕсене тивĕçнисем.**

Шывпа тивĕçтересси

# Шыв башни электроэнергисĕр ĕçлемест

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕнче тăтăшах çынсене йышăнмалли кунсем пулаççĕ. Çакăн пек йышăну кунĕсене район прокурорĕ Сергей Павлов та хутшăнать.

Иртнĕ йышăнусенчен пĕринче Шомикра пурăнакан арçынтан ялсенче шывпа тивĕçтерес ыйту пулнă.

Чăнах та, шыв тата пурнăç – уйрăлми ăнлавсем: шыв çук çĕрте пурнăç та çук. Анчах та кашни çыннăн шыв çут çанталăкри тĕпсĕр çăл куç маррине ăнланмалла. Шыва нимĕнле те улăштараймăн – унран пирĕн пурнăç килет. Çын хăйĕн хуçалăхне шывсăр тытса та тăраймасть. Таса шыв пурри вара – чăн та пуянлăх.

Муркаш район администрацийĕ те çакна ăнланса район территорийĕнче ĕçмелли таса шывпа тивĕçтерессине пысăк пĕлтерĕшлĕ енсен шутне кĕртет. Анчах та район территорийĕнчи шыв башнисем тата шыв пăрăхĕсен тытăмĕ – вăтăр-хĕрĕх çул каялла тунăскерсем. Çавăнпа та вĕсене юсани тата оборудование улăштарни те кирлĕ. Пирĕн районта та çулсеренех çуллахи вăхăтра шыв çитменни палăрать.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем башньăсене тĕрĕс-тĕкел тытса тăрассипе хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех туса пыма тăрăшаççĕ, анчах та башньăсене ĕçлеттернĕшĕн электроэнерги тăкакĕ пухăнса пырать. Электроэнергисĕр вара шыва пăрăхсем тăрăх юхтарма çук. Пахчари йăрансене шăварнă е картишĕнчи бассейна тултарнă чухне, ĕçме е хуçалăхри ытти ĕçе пурнăçлама шывпа усă курнă вăхăтра шыв башнине ĕçлеттерме электроэнерги кайнине шутламалла. Çавăнпа та шыв башнине ĕçлеттерме электроэнергишĕн укçа тӳлесе тăманни пăрăх тăрăх шыв юхма чарăнассипе тӳррĕн çыхăнса тăрать.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем 2003 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ номерлĕ «Об общих принципах организации самоуправления в Российской Федерации» Федераци саккунĕнчи 14 статйин 1 пункчĕпе килĕшӳллĕн ялта пурăнакансене шывпа тăтăш тивĕçтерсе тăрас тĕллевпе ĕçе хăйсене панă полномочие кура пурнăçлаççĕ. Нумай ял тăрăхĕн администрацийĕнче хальхи вăхăтра шывпа тивĕçтермелли объектсене кадастр учетне тăратассипе тимлеççĕ тата çав объектсене ĕçлеттерсе-пăхса тăракан организацисене парас тĕллевпе объектсем хальхи вăхăтра хуçасăр пулнине çирĕплетеççĕ. Ялсенче ирттекен пухусенче шывпа усă курма электроэнергишĕн тӳлев пухассипе ответлă çынсене палăртаççĕ. Башньăна электроэнергипе ĕçлеттерме укçа пухассине вăраха ямасан шывпа тивĕçтерессипе те йĕркеллĕ пулса пырать.

Çапла ял тăрăхĕн администрацийĕ кăна тимлени çителĕксĕр, уйрăм çынсем е организацисем те çак ĕçе хутшăнни кирлĕ. Мĕншĕн тесен çав объектсене ĕçлеттерсе тытса тăракан субъект уйрăм çын та, организаци те пулма пултарать.

**Хамăр инф.**

Архив службине – 100 çул

# Кунта истори типтерлĕн упранать

**2018 çул – архивсенче ĕçлекенсемшĕн паллă çул. Раççей патшалăх архив службине туса хунăранпа июнь уйăхĕнче 100 çул çитрĕ. Чăваш Енри архив службин ĕçченĕсемшĕн вара республикăра архив службине 95 çул каялла йĕркелени те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.**

Архивсем пухас тата вĕсене упрас ыйту 95 çул каялла Чăваш автономине туса хунăранпах тухса тăнă. Çавăн чухне архив учрежденийĕсен сечĕ сарăлма тытăнать, уессенчи ĕç комитечĕсенче архив бюровĕн уполномоченнăйĕсем ĕçлеме тытăнаççĕ, архивсем йĕркеленеççĕ.

Каярах çĕнĕрен йĕркеленекен кашни райĕçтăвком çумĕнче район архивĕ туса хурассине те пурнăçа кĕртеççĕ. 1936 çултанпа вара кашни районтах архив ĕçлет, вĕсенче заведующи те пулать. Ĕçе кирлĕ пек пурнăçласа архивсем тĕрлĕ документ упракансем пулса тăраççĕ. Хăшĕсене республикăн тĕп патшалăх архивне те параççĕ.

Муркаш районне, ăна 1944 çулта йĕркеленĕ хыççăн, çак ятпа тытăнса тăрассине 1959 çулта пăрахăçланă. Шел пулин те, 1940 – 1950-мĕш çулсенче архив мĕнле ĕçлени пирки те документсем сыхланса юлман.

1964 çулта района çĕнĕрен йĕркелесе янă хыççăн тепĕр икĕ çултан çеç архива материалсем пуçтарăнма пуçлаççĕ. Район архивĕн ĕçченĕ Фекла Кожевникова архив валли ятарлă çурт пулмасăрах ĕçе тытăнать. Вăл ытларах çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе республика архивне тухса çӳрет, учрежденисемпе предприятисенче документсем йĕркелет.

Тĕрлĕ çулта Муркаш районĕн архив заведующийĕ пулса çаксем ĕçленĕ: 1948–1949 çулсенче – Д. Казаков, 1949–1955 çулсенче – В. Васильев, 1956–1959 çулсенче – М. Пискалина, 1964 – 1981 çулсенче – Ф. Кожевникова, 1981 – 1993, 2006 –2009 çулсенче – Л. Николаева, 1993 – 2004 çулсенче – Р. Седатлова. 2009 çултанпа паянхи кунччен çак ĕçре И. Николаева тимлет.

Çĕршер, пиншер çыннăн пурнăçĕнче архив пысăк вырăн йышăнать: архив документсемпе пурте усă куратпăр. Уйрăмах юлашки икĕ-виçĕ вунăçуллăхра, тĕрлĕ сферăра улшăнусем пулса иртнĕ вăхăтра, çынсем архивсенче упранакан информаци кирлине туйса илни сисĕнет.

Архивра упранакан документсем хăш чухне саккунлă правасемпе интересене хӳтĕлеме те май параççĕ. Акă, сăмахран, пенси реформине ирттернĕ вăхăтра тĕрлĕ документ ыйтакансем самаях йышланчĕç. Стаж çирĕплетмелле е ĕç укçи калăпăшне кăтартакан справкăсем кирлĕ – пĕтĕмпех архиврa тупма пулать. Пĕтнĕ организацисем хăйсен патĕнче ĕçленĕ çынсем пирки калакан ĕçсене архива упрама парса тăнăран ку енĕпе те документ сахал мар.

Юлашки вăхăтра пурăнмалли çурт, хуçалăхри ытти çурт-йĕр харпăрлăхра пулнине çирĕплетекен, пурлăх, çĕр пуррине кăтартакан документсемпе ытларах ĕçлеме тивет.

Ялсем мĕнле пуçланса кайнине, хушамат-йăхсем камран е мĕнрен пуçланнине тĕпчекенсем те архива нумайăн килеççĕ. Тĕрлĕ документ тăрăх тĕпчев ĕçĕсем ирттереççĕ. Интересленекенсем хушшинче ачасемпе çамрăксем те пур. Вĕсем пирĕн мăн асаттесем тытса пынă йăла-йĕркесем çинчен пĕлме тăрăшни, вырăнти историпе пĕтĕмĕшле кăсăкланни сисĕнет.

2018 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Муркаш район архивĕнче 261 фонд упранать, 1923 – 2015 çулсенчи информацие тытса тăракан 34786 документ. Вĕсенчен 18814 документ ертсе пыраслăхпа çыхăннă, 5135 – хуçалăх кĕнекисем, 10837 ĕç – çынсен харкамлăхĕн ĕçĕсем.

2012 – 2015 çулсенче хăш-пĕр ĕçсене Чăваш Республикин харпăрлăхне парассипе пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр – 5761 ĕç хатĕрлесе управа патăмăр. Вĕсен йышĕнче – Муркаш районĕн ĕçтăвкомĕн, унăн пайĕсен, Сĕнтĕр тата Муркаш район сучĕсен, профсоюз организацийĕсен документĕсем тата ытти те.

2017 çулта архиври документра 2911 çын усă курнă. Пурлăх тата несĕлсене тĕпчессипе 1206 ыйту пулнă. Социаллă тата право тĕлĕшĕнчи 1590 ыйтупа тухнă, вĕсенчен 1467 ыйтăва тивĕçтерме пултарнă. Архив документсен копийĕсене 1410 листа туса панă.

Çынсен ыйтăвĕсене уйрăммăн тивĕçтернипе пĕрлех архив ĕçченĕсем тĕрлĕ мероприяти ирттерме те вăхăт тупаççĕ. Тĕрлĕ организацире документсене йĕркелессипе ĕçлесе пыракан специалистсене явăçтарса уяв çулталăкĕнче, Пĕтĕм Раççейри «Архиври кас» акци вăхăтĕнче, сăмахран, çавра сĕтел ирттернĕ. Ытти мероприятире ума лартнă задачăсене пурнăçласси çӳтсе явнă, юлашки 5 çулти ĕçе хак панă. Архивра тĕрлĕ курав та ĕçлерĕ.

**И. НИКОЛАЕВА,**
**Муркаш район архивĕн ертӳçи.**

Салам

**ХАКЛĂ МЕДИЦИНА ĔÇЧЕНĔСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире çывхарса килекен хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Çăмăл мар, анчах та питĕ пархатарлă ĕç тăватăр эсир. Çынсене чиртен сывататăр. Вĕсен пурнăçне çăлатăр. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр, канмалли кунсене пăхмасăр ĕçлетĕр.

Эмелпе кăна мар, ăшă сăмахпа та сиплетĕр эсир. Çапла майпа чирлисене сывалма шанчăк паратăр, пурăнма вăй-хал хушатăр.

Кулленхи ĕçре чир-чĕре вăхăтра тупса палăртассине те, профилактика ĕçне те нумай тимлĕх уйăратăр.

Тавах сире хăвăр ĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланăшăн, иксĕлми ырă кăмăлăршăн, районăн социаллă пурнăçне экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн.

Ĕçĕрсем яланах ăнса пычăр. Ыттисене ырă туни хăвăр патăра та ырăпах таврăнтăр. Хăвăрăн та сывлăхăр яланах çирĕп пултăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ килтĕр.

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Ӳсĕм çулĕ

# Ырă тĕслĕхпе паллашрĕç

Мăн Сĕнтĕр райповĕн коллективĕ ыранхи куна пăхса вăй хунипе аталанса пырать.

Çакă нумаях пулмасть унăн ĕçĕпе республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен тĕп редакторĕсем паллашнинчен те курăнчĕ.

Тĕл пулу Чăвашпотребсоюз йĕркеленипе иртрĕ. Çавăнпа та ăна уçнă май унăн ертӳçи В. Павлов хăйсен ĕçне-хĕлне массăллă информаци хатĕрĕсем çутатни тата халăха кăтартни икĕ енлĕ калаçу йĕркелеме пулăшнине палăртрĕ. Ку вара малашлăхлă аталанушăн питех те пĕлтерĕшлĕ. Ĕçлени тата пурнăçланине кăтартма пĕлни Чăвашпотребсоюза Раççей Федерацийĕн Центросоюз тытăмĕнче малтисен ретĕнче пыма пулăшать.

– Çак ӳсĕм пĕччен-иккĕн ĕçленипе пулмасть. Хамăр йышри райпосем кунта пуçарулăх кăтартни питех те вырăнлă. Эсир паян паллашакан Мăн Сĕнтĕр райповĕ халăхпа тата халăхшăн ĕçлессипе çулленех малти вырăнта тытать. Тĕллевĕ пысăк пулнăранах-тăр ĕçĕсем те çуллен мал туртăмлă пыраççĕ, – терĕ Валерий Михайлович журналистсене ĕçлĕ çул çӳреве чĕнсе.

Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕ Л. Майкова хăнасене Калайкассинчи суту-илӳ центрĕнче кĕтсе илнĕ май, иртнĕ çулхи тата кăçалхи 5 уйăхри ĕç кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ.

– Экономика тĕрекĕ – пĕрле вăй хунинче. Çакна пирĕн коллективра кашниех ăнланать. Çавăнпа та пирĕн ĕçченсем вырăнсенче яваплăха туйса ĕçленинчен тĕлĕнме кирлĕ мар, – терĕ Людмила Петровна уявăн официаллă пайне уçса. – Пĕлтĕр ваккăн тавар сутса тата обществăлла апатланура пĕтĕмпе 325,5 миллион тенкĕлĕх çаврăнăш турăмăр, 621 пин тенкĕлĕх тӳлевлĕ услугăсем патăмăр.

Юлашки çулсенче райпо хатĕрлев ĕçĕпе пуçаруллă. Иртнĕ çул, тĕслĕхрен, Мăн Сĕнтĕр райповĕ халăхран 68,5 тонна аш-какай, 912,8 тонна сĕт, 35,9 тонна çĕр улми, 82 тонна пахча çимĕç, 121,8 тонна улма-çырла пухнă. Халăха 2975 пуç чĕр тата хур-кăвакал чĕпписем реализациленĕ.

– Пирĕн районта икĕ райпо. Ку пире тивĕçтерет. Мĕншĕн тесен пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕсем ял çыннин ыйтăвне тивĕçтерессипе çĕнĕлĕхсене ытларах çул параççĕ. Мăнсĕнтĕрсем хăйсен социаллă яваплăхне туйнипе – ĕçре чăн-чăн лидерсем, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пĕрлехи канашлура.

Мăнсĕнтĕрсем япăх ĕçлеме пултараймanни паллă. Çав вăхăтрах татах та лайăхрах ĕçлесси те куç умĕнче. Çакна тĕпулăва хутшăннисем суту-илӳ çурчĕпе, «Илем» кафепе, Москакассинчи аптекăпа тата çĕвĕ цехĕпе, Мăн Сĕнтĕрте çăкăр пĕçерессипе паллашсан лайăх ăнланчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Районти юрăпа ĕç тата спорт уявĕнчен

# Акатуй! Акатуй! Савăнма сăлтавĕ пур!



Ырă сунса кĕтетпĕр Акатуйне.



В. Петровпа И. Моторин (варринчисем) муркашсен Акатуйĕнче пулма хавас.

### УЯВ ПРОГРАММИ ПУЯН

Кăçал çурхи – çуллахи çанталăк уяр та ăшă кунсемпе ытлашши иртĕхтерсех каймасть. Иртнĕ вырсарникун та çаплах пулчĕ. Апла пулин те ăмăр çанталăк та, хутран-ситрен пĕрĕхекен çумăр та Акатуя пухăннă çынсен кăмăлне пăсма пултараймарĕ. Лантăш вăрманĕн уçланкинче кунĕпех хавас юрă-кĕвĕ шăранчĕ. Пĕрлештернĕ хор, йышлă пултарулăх ушкăнĕсем çынсене хавас кăмăл-туйăм парнелерĕç. Тĕрлĕрен выставка, аттракцион, ача-пăча площадки ĕçлерĕ, вăйăсем, спорт тупăшăвĕсем иртрĕç, ал ĕç ăстисен пултарулăхĕн «Ял картишĕ» курав-конкурсĕ хăйĕн патне илĕртрĕ, Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсен суту-илӳ тата апатлану предприятийĕсем, уйрăм предпринимательсем уява пухăннисене хăйсен продукцине тата апат-çимĕçне сĕнчĕç.

Ырă йăлапа çав кун ака-суха ĕçĕсене пĕтĕмлетрĕç, мала тухнисене, пултарулăхпа тата хастарлăхпа палăрнисене чысларĕç-саламларĕç, нумай ачаллă çемьесене тӳлевсĕр çĕр участокĕ илме свидетельствăсем, ача амăшĕн капиталне илме тивĕçнисене сертификатсем, çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма субсиди илме свидетельствăсем пачĕç.

Хăнасем йышлă килсе çитрĕç муркашсен район уявне, ырă сăмахсем каласа уявпа саламларĕç, ăнăçу сунчĕç.

### АЙТĂР УÇАР УЯВА!

Савăнăçлă лару-тăрура уява **район пуçлăхĕ, депутатсен район Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев** уçрĕç, пухăннисене уявпа саламларĕç. Ун умĕн вара тĕп сцена умĕнче уçланкă анлăшĕнче музыкăпа хореографи композицийĕ иртрĕ, районти культура ĕçченĕсен пĕрлештернĕ хорĕ юрăсем шăрантарчĕ.

Игорь Николаев палăртнă тăрăх, район çыннисем тăван çĕр çинче чунне парса ĕçлеме хăнăхнă. Хресчен ĕçĕ вара яланах хисепре пулнă. Патшалăх та çĕр ĕçченне пулăшусăр хăвармасть.

Ростислав Тимофеев çавна асăнчĕ. Муркашсем уява çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хăнăхнă. Акă иртнĕ çул итогĕсемпе бюджет ыйтăвĕсене йĕркелесе пырассипе республикăри 26 муниципалитет хушшинче чи ăнăçлисен шутне кĕме тивĕçнĕ. Пĕтĕм Раççейри «Лучшее муниципальное образование России в сфере управления общественными финансами» конкурса хутшăнса вара район иртнĕ çул итогĕсемпе çĕршыври 59 субъектăн 104 хула округĕпе 125 муниципаллă район хушшинче 3-мĕш вырăн йышăнса 3-мĕш степень диплома илме пултарнă.

Уй-хир ĕçĕсене районта йĕркеллĕ ирттернĕ. Пысăк тухăç илме шанчăк çук мар.

### МУРКАШСЕМ – МАТТУР ВĔСЕМ

Уяв саламĕсем... Чылай пулчĕç вĕсем çав кун. Уява пухăннисене районти юрăпа ĕç тата спорт уявĕ ячĕпе саламлама кăмăл тунисем хушшинче **Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин** та пулчĕ. Муркашсене вăл уявпа ăшшăн саламларĕ, малашнехи ĕçсенче те ăнăçу сунчĕ, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Салам çырăвне вуласа пачĕ.

Иван Моторин хăйсен хастар ĕçĕпе палăрнисене патшалăх тата ведомство наградисене парса чысларĕ. Вăл шутра тава тивĕçлĕ ята тивĕçнине çирĕплетекен удостоверени те, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене те, республика министерствисен Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене те, Чăваш Республикин ĕç ветеранĕн удостоверенийĕсене те, тĕрлĕрен свидетельствăпа сертификат та.

Муркашсене уявпа Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Александр Федотов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Олег Дельман, Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, РФ Патшалăх Думин депутачĕн Леонид Черкесовăн пулăшаканĕ Андрей Спиридонов, муркашсен ентешлĕхĕн ертӳçи, ЧНК вице-президенчĕ Владимир Тяпкин, Чăвашпотребсоюз пĕрлешĕвĕн, профсоюзсен Чăваш Республикинчи канашĕн представителĕсем те саламларĕç, ĕçре палăрнисене ведомство наградисене пачĕç.

Уява кӳршĕ районсен хăнисем те пысăк йышпа килсе çитнĕ. Шупашкар, Етĕрне, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсен, Мари Эл Республикинчи Горномарийски районĕн представителĕсем муркашсене уявпа саламласа малашнехи ĕçсенче те ăнăçу сунчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Андрей Миронов иртен пуçласа яра кун район уй-хирĕнче тăрăшакан ĕçченсен пысăк ушкăнне ĕç çи пĕтĕмлетĕвĕсемпе район администрацийĕн дипломĕсене парса хавхалантарчĕ. Чăвашпотребсоюзăн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене тивĕçекенсем те районти кооператорсем хушшинче сахал мар пулчĕç.

### АКĂ ВĔСЕМ – ĔÇ ПАТТĂРĔСЕМ

Чăннипех те сахал мар иккен кун пеккисем пирĕн районта. Кулленхи ĕçре палăрнисене, хăйсен хастарлăхĕпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракансене çав кун сцена çине чĕнсе кăларса пĕтĕм халăх умĕнче чысларĕç-саламларĕç. Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн водителĕ Михаил Яковлев «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн выльăх пăхакан рабочийĕ Эльвира Васильева, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова тата «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн участок пуçлăхĕ Валентина Соловьева Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин, Культура, национальноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин, Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене, ытти ведомство наградине, район шайĕнчи наградăсене тивĕç пулнисем те вуншар та вуншар.

(Районти Акатуйра тĕрлĕ шайри наградăна тивĕçнисен тулли списокĕпе район хаçачĕн çитес номерĕнче паллаштарăпăр. Авт.).

### СЕРТИФИКАТСЕМ ТАТА СВИДЕТЕЛЬСТВĂСЕМ

Уяв уявпа та, уяв кунĕ харпăр хăйĕн пурнăçĕнче яланлăхах асра юлмалли самантпа паллă пулни пĕлтерĕшлех пулĕ. Çак сăмахсене чи малтанах пурнăç çулĕпе утма пуçăнакансем, çамрăк çемьесемпе çамрăк ашшĕ-амăшĕ тĕлĕшпе каламалла.

Виçĕ çемье федерацин «Обеспечение доступным и комфортным жильем и коммунальными услугами граждан Российской Федерации» программипе пурăнмалли çурт-йĕр тума е туянма социаллă тӳлев илме свидетельствăна тивĕçрĕ. Кусем вĕсем Юнкă ял тăрăхĕнчи Юнкă ялĕнчи Маринăпа Дмитрий Владимировсем, Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнчи Екатеринăпа Александр Прокопьевсем, Оринин ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси ялĕнчи Еленăпа Сергей Курбановсем.

Федерацин тĕллевлĕ тепĕр программипе – «Устойчивое развитие сельских территорий на 2014 – 2017 годы и на период до 2020 года» программăпа ялта ĕçлесе пурăнакансен çамрăк çемйисем – Оринин ял тăрăхĕнчи Оринин ялĕнчи Оксанăпа Иван Васильевсен тата Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕнчи Иринăпа Владимир Шапошниковсен çемйисем хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма социаллă тӳлев илмелли свидетельствăна тивĕçрĕç.

Ача амăшĕн капиталĕн сертификатне вара Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнчи Анжела Силовăпа Катькас ял тăрăхĕнчи Катькас ялĕнчи Анюта Николаева, харпăрлăха çĕр участокĕ тӳлевсĕр илмелли сертификата Юнкă ял тăрăхĕнчи Юнкă ялĕнчи Надеждăпа Владимир Шандимировсен тата çав ял тăрăхĕнчи Кăпас ялĕнчи Лирăпа Алексей Гавриловсен 3 ачаллă çемйисем тивĕç пулчĕç.



Шапошниковсемпе Васильевсен çемйисем çурт-йĕр çавăрма патшалăх пулăшăвне тивĕçрĕç.

Районти юрăпа ĕç тата спорт уявĕнчен

# Акатуй! Акатуй! Савăнма сăлтавĕ пур!



Çăм арлар-и, тĕрĕ тĕрлер-и?



Волейболистсен Мăн Сĕнтĕрти «ТрубПласт» команди – Акатуй кубокĕн çĕнтерӳçи.

**«ЯЛ КАРТИШĔНЧЕ»**

Чăвашсен авалхи йăли-йĕркипе, хамăрăн несĕлсен историйĕпе, культурипе кăсăкланакансене «Ял картишĕ» хăйĕн патне йыхравларĕ. Курав-конкурс валли кашни ял тăрăхĕ хăйĕн кил картишне хăйне евĕр йĕркелеме тăрăшнă. Анчах та вĕсене пурне те чăвашлăх туйăмĕ пĕрлештерсе тăрать. Пыракансене кашни ял картишĕнчех чăвашсен ырă йăлине тĕпе хурса çăкăр-тăварпа кĕтсе илеççĕ, чăвашсен кăпăклă сăрине ĕçсе пăхма сĕнеççĕ, кукăль-çăмахпа сăйлаççĕ. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, уяв хăнисем район пуçлăхĕпе Игорь Николаевпа тата район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ростислав Тимофеевпа пĕрле ял тăрăхĕсем хатĕрленĕ картишсенче пулса пирĕн авалхи чăвашсен йăли-йĕркипе паллашрĕç, пир епле тĕртнине, çăнăх авăртнине, çăм арланине хăйсен куçĕпе курма пултарчĕç.

Пĕрлехи пĕлтерĕшлĕ уявсенче «Ял картишĕсен» конкурсне ирттересси районта йăлана кĕчĕ темелле. Акатуйри курав-конкурса та тĕплĕ хатĕрленни куçкĕрет. Çавăнпа та комисси членĕсене тĕрлĕ номинацире чи пултаруллисене палăртма та çăмăлах пулмарĕ пулĕ.

«Сохранение и передача национальной культуры и традиций» номинацире чи пултарулли тесе Ярапайкасси ял тăрăхĕн картишне палăртрĕç. Çатракассипе Оринин ял тăрăхĕсем 2-мĕш тата Муркашпа Юнкă ял тăрăхĕсем 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

«Лучшая презентация дворика» номинацире чуманкассисене çитекенни пулмарĕ. Ку номинацире ярославкăсемпе шетмĕпуçсем 2-мĕш, уйкасянасалсемпе мăнсĕнтĕрсем 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

«Природа родного края» номинацире катькассем 1-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕç. Хорнуйсемпе йӳçкассисем – 2-мĕшсем, ильинкăсемпе турайсем – 3-мĕшсем.

Конкурссене пĕтĕмлетнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев малти вырăнсене тивĕçнисене дипломсем парса чысларĕ. Çавăн пекех вăл «Символы Моргаушского района» конкурс çĕнтерӳçисене те дипломсемпе хавхалантарчĕ.

**АЙ, ЮРЛАР-И? АЙ, ТАШЛАР-И?**

Муркашсем – ĕçре кăна мар, ташă-юрăра та маçтăрсем. Çакна уявра тепĕр хут курса ĕненме май килчĕ. Кунĕпех Лантăш вăрманĕн уçланкинче илемлĕ юрă-кĕвĕ янăрарĕ. Художество пултарулăх ушкăнĕсем, çамрăксен тата ача-пăча коллективĕсем пĕрин хыççăн тепри сцена çинче хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç, пухăннисене хавас кăмăл-туйăм парнелерĕç. Пур коллективăн пултарулăхне те курса хаклама май пулчĕ çав кун. Чылайăшĕ хавас кĕвĕпе вăрман уçланкинче ташă картине тăчĕ.

Ача-пăча коллективĕсем валли вара ятарлă уйрăм сцена уйăрнă. Кунта ачасен пултарулăх ушкăнĕсем юрă-кĕвĕ шăрантарчĕç, шӳтлĕ сценкăсем лартрĕç.

Уяв кунĕнче вĕсене уйрăмах савăк та хаваслă пулчĕ. Ачасем валли ятарлă хавхалантару программи йĕркеленĕ. Кунсăр пуçне вĕсем карусельсем çинче ярăнса савăнчĕç, батут çинче сикрĕç, тĕрлĕрен конкурспа аттракциона хутшăнса чылайăшĕ пылак парнесене тивĕçрĕ.

**СПОРТ ĂМĂРТĂВĔСЕНЧЕ**

